# Савнӑ хӗр, хитре хӗр...

В. П. Эхмере

Савнӑ хӗр,
Хитре хӗр,
Юрататӑн пулсассӑн,
Итле — купӑс мӗн калать...
«Санӑн ҫутӑ илемшӗн
Манӑн шухӑш пӑтранать,
Эпӗ сана курсассӑн,
Хӗвел тухнӑн туйӑнать...»
Савнӑ хӗр!
Хитре хӗр!
Юрататӑн пулсассӑн,
Итле — купӑс мӗн калать...
«Эсӗ кулран пӑхсассӑн,
Манӑн чӗре ҫӗкленет;
Эсӗ сӑмах хушсассӑн,
Манӑн чунӑм ҫӗкленет...»
Савнӑ хӗр!
Хитре хӗр!
Юрататӑн пулсассӑн,
Итле — купӑс мӗн калать...
«Сана чунтан юратса
Ыталаса макрӑттӑм,
Сана пӑхса, савӑнса
Ӗмӗр санпа пулӑттӑм...»
Савнӑ хӗр!
Хитре хӗр!
Юрататӑн пулсассӑн,
Итле — купӑс мӗн калать...
«Сана чунтан юратса
Ыталаса макӑрӑттӑм,
Сана пӑхса, савӑнса
Санпа кӑна пурнӑттӑм».
Савнӑ хӗр!
Хитре хӗр!
Эсӗ мана та саван,

Ăна купăс каламасть...

*Павлов, Ф. П. Савнăхĕр, хитре хĕр...: сăвă // Павлов, Ф. П. Çырнисен пуххи / Ф. П. Павлов. – Шупашкар, 1992. – С. 66.*